*  *  *

*Петӗр Хусанкая*

Шикленнӗ патшасем поэтсенчен,
Поэтсене дуэльсенче пӗтернӗ.
Элек-ҫăхав ҫӳрет вӗсем ҫинчен,
Чăн поэтсен шăпи ялан пит эрлӗ.

Поэт вăл мыскараҫă та хăш чух,
Хăш чух поэт ҫатта та ҫапкаланчăк.
Анчах вăл нихăҫан пулман ансух,
Вăл нихăҫан та пулмӗ ҫăткăн анчăк.

Чи харсăр, ырă ҫын та — поэтах,
Вышкайсăр ҫӳллӗ чăн поэтăн шайӗ.
Ун ӗҫӗ те, хисепӗ те пайтах,
Унпа пӗр президент та танлашаймӗ.

Поэт туять этемлӗх тивӗҫне,
Ҫунать ҫап-ҫуттăн ҫулӗ ҫăлтăр витӗр.
Кайсассăн вăл кунтан ун тӗп ӗҫне
Хур кайăк ҫулӗнчи тусан ҫеҫ витӗ.